Владимир КУЗЬМИН

# Чĕрĕлĕх тункатисем

## Калав

Тĕлĕк тĕлех килет тени тĕрĕсех пуль çав. Эпĕ пĕр каçхине сывлăшра çапкаланса вĕçетĕп пек. Çӳл тӳперен çĕмрен евĕр шăхăрса аннă самантра ман айра улăх кавирĕ чечекленсе сарăлчĕ, мана ытама илсе чĕрĕлĕх сывлăмĕпе ӳсĕртсе ячĕ. Асамлă аташура пурнăçри хĕрӳлĕх тапхăрĕ куç умне анлăн тухса выртрĕ.

Лăпкă укиян та лăпкă маррине Çĕрĕн инçет хĕвел тухăç енчи чуллă çыранне мĕнле хăватпа кисретнинченех пĕлетĕп-ха. Унта çар хĕсметĕнче пулнă вăхăтранпах. Пурнăç укиянĕ те Тĕнче укиянĕнчен пĕртте кая мар кĕрлет иккен. Таçталла-таçталла çити курăнакан шыв анлăшĕнчи хумсем вĕçĕ-хĕррисĕр аташуллăн тăвăл çĕкленĕ пекех, этемлĕх те хăйĕн хумĕнче ишет, патшалăхсене пайланнă кашни халăх та хăйĕн çыранĕнче ырлăх шырать, хăватлă хумсен кăпăкĕнче ăс-тăнĕпе вĕçĕмсĕр пăтранать. Тинĕс шывĕ хăпарнă е чакса кайнă майлăн аталанса пыракан çĕршывăмăн черетлĕ хумĕ мана Элĕк ен вăрттăнлăхĕн çыранне çитсе çапрĕ, кун-çулăмăн çаранне симĕслетрĕ.

Çамрăклăх хĕрӳлĕхне ниçта хума çук. Ĕçĕме эпĕ часах йĕркелесе ятăм. Çывăх юлташсем тупрăм. Хĕр кулли те çуллахи хĕвел пекех ăшăтать. Çапах та тунсăх тĕтри куç умĕнчен сирĕлмест. Вăрнар пур енчен те хула майлăрахчĕ çав, вăхăта кирлĕ пек савăк ирттермелли вырăнĕсем те çителĕклехчĕ. Хырлăх вăрманĕ хăех мĕн тери техĕмлĕ. Элĕкре вара... чиркӳрен тунă Культура çурчĕсĕр пуçне урăх нимех те çук. Ялĕ витĕр курăнса ларать. Мунча пулсанччĕ хăть. Халăх валли тасалу-сиплев çурчĕ лартас вырăнне район пуçлăхĕсем пăспа хĕртĕнсе милĕкпе çапăнма Шупашкара чуптараççĕ. Мана вара Вăрнар мунчисем сиплĕхпе кĕтеççĕ. Кунта çуралса ӳснĕ çыншăн, паллах, хăйсен тăван Элĕкĕ те темрен хаклă пуль-ха та... Манăн чун-чĕре çумне вăл ниепле те çывхараймасть-ха, мана хăйĕн ытамне ăшшăн çавăрса илеймест.

Çапла нушаланса пурăннă хушăра çиçĕм çиçнĕ пек сасартăк çиçĕм ялкăшса илчĕ, чĕре таппи çĕре кисретсе ячĕ. Çумри тĕтре сирĕлсе пынă май ман ума юмахри асамлă пике-акăш ярăнса тухрĕ: кĕнеке лавккинче майралла çĕлетнĕ кăвак чечеклĕ çӳхе кĕске кĕпе, шĕвĕр пуçлă шурă пушмак тăхăннă, кăтралатнă, çăра çӳçлĕ, сырă куç харшиллĕ, çĕмĕрт куçлă, çӳхерех туталлă хĕр, кĕç-вĕç куларах калаçма хатĕрленнĕн, тулли çӳлĕксем çумĕнче хускалмасăр тарать.

Сисмелле мар иксӗмӗрӗн те куҫсем йӑлтӑрт ҫиҫсе илчӗҫ те, ҫийӗнчех аяккалла сиксе ӳкрӗҫ. Самантрах чӗрене сиктерекен вӑй силлесе кӗлеткене вӗрилентерчӗ. Сассӑм та вӑйсӑррӑн тухрӗ:

– Ырӑ кун пултӑр.

– Тавах, сире те ҫавнах сунатӑп. Мӗн каласшӑн-ке?

– Эпӗ... мӗн... Мӗнле кӗнеке туянтӑр?

– Акӑ, "Салампи" суйласа илтӗм. Тахҫанах вуласшӑнччӗ те... Ниепле те вӑхӑт тупӑнмасть. Мӗн ҫырать-ши пирӗн Артемьев? Хамӑр ял ачи. Эсир, паллах, тахҫанах вуланӑ пуль...

– Малтан кӗнекен тухсанах. Чӑваш хӗрарӑмӗн чунӗ, ырӑ кӑмӑлӗ, сӑн-сӑпачӗ, тумӗ.. – пурте пур унта. Сӑнарлӑхӗпе тыткӑнлать, – тинех хал пырса кӗчӗ мана. – Тури Выларан пулас-ха апла эсир? Александр Спиридонович пыркаласа ҫӳрет-и яла?

Ҫакна илтнипе пикен яп-яка пит ҫӑмартийӗсем йӑл кулӑпа илемленсе улшӑнчӗҫ, вара шап-шурӑ шӑлӗсене хитрен кӑтартрӗ:

– Тури Выларан мар эпӗ, Тури мар хуларан – Мускавран, – терӗ. – Анне манӑн Вила хӗрӗ пулнӑ. Элӗк каччине качча тухнӑ та... Эпӗ ҫак ялтах – Элӗкрех ҫуралнӑ. Асӑрханӑ пуль вӑрӑм пӗвесене?

– Шыва та кӗнӗччӗ-ха пӗр пӗвинче, пулӑ та сӗрнӗччӗ. Ҫӑпата пек карассем туртса кӑлартӑмӑр.

– Анне Тури Выларан пулнӑ пирки чӑваш классикне хамӑрӑн тетӗп-ҫке. Мӗнке, ҫапах... элӗксене ҫӳле ҫӗкленӗ ҫын.

– Тӗрӗсех. Чӑвашсем хушшинче ҫукрах пуль унашкал вӑйлӑ писатель. Эпӗ нумай вулатӑп та... Артемьевпа танлаштармалли, Александр Спиридоновичран маларах хумалли ҫыравҫӑ хальлӗхе курмастӑп. Халӑх чунӗ, ҫӗр сӗткенӗ ҫитменрех пек ыттисен... – темшӗн ку хӗре кӑштах тӗпчес килсе кайрӗ манӑн.

– Тен, аҫусем те сирӗн авалхи Элӗксен йӑхӗнченех пуль-ха? – терӗм.

Вӑл мана ӑнланса илейменнипе хулпуҫҫийӗсене ҫӑмӑллӑн сиктерсе илчӗ те куҫран чӑрр! пӑхрӗ:

– Мӗнле Элӗк йӑхӗнчен-ке тата? Каларӑм-ҫке Элӗкре ҫуралнӑ тесе... Элӗк салинче. Йӑх таврашне вара... ҫук, нимӗн те пӗлместӗп, асаттен ашшӗ-амӑшӗ кам пулнине те. Такамсем... Шкулта истори вӗреннӗ чухне илтнине кӑшт астӑватӑп. Неолит, бронза тапхӑрӗсенче те этем ҫӳренӗ тет-и пирӗн таврара. Ку вӑл пирӗн эрӑчченхи иккӗмӗш пин ҫуллӑхрах пулнӑ тенӗччӗ учитель. Кайран та кунта темле халӑх йӑхӗсем те пурӑнни ҫинчен каланӑччӗ вӑл. Элӗк йӑхӗ?..

Пуҫарнӑ кӑсӑклӑ ыйтӑва малалла аталантарса хӗре пулӑшма шутларӑм:

– Пирӗн мӑн асаттесем Вӑтам Атӑл тӑрӑхне ҫиччӗмӗш-саккӑрмӗш ӗмӗрсенче куҫса килни паллӑ. Ак ҫакӑ сирӗн вырӑнта эппин, тутар-мари-вырӑс йӑхӗсем йӑшӑлтатнӑ. Ҫӗнӗ ҫӗре, сӗм вӑрмана пусмӑртан тарса ҫитнӗ чӑвашсем вуннӑмӗш-вун иккӗмӗш ӗмӗрсенче вирьял ушкӑнне пайланнӑ. Вӗсем ялсем ҫавӑрнӑ. Ячӗсене ӗнтӗ... е хайсен паттӑрӗ, е паллӑ вырӑн ячӗпе панӑ. Пӗлетӗр-и, вӗсен хушшинче Элӗк ятлӑ этем те пулнӑ.

– Ай ку чӑннипех питӗ интереслӗ. Ма-ке ун ҫинчен эпӗ ку таранччен те пӗлмен?

– Мускавра пурӑнакансkere сире кам калать пуль ун ҫинчен?

– Вăл сас-хыпара эпĕ хам та кунта Элĕкре мар, Вăрнарта илтнĕччĕ.

– Камран-ке? – кĕнеке тусĕсем урăх килменнипе усă курса пире хăлха тăратсах итлекен сутуçă та çумарах пырса тăчĕ. – Каçарăр, ман та пĕлесчĕ кун пирки.

– Камран тетĕр-и? Вăрнарта пĕр паллă çын пурăнать. Кирилл Макарович Никишов текенскер. Кăлкан пек çӳçлĕ, юман кĕрешĕ пек патвар, юмахри пек чăн-чăн шур сухал. Сакăр вуннăсенче хăй. Революцичченех тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнăскер. Хăй вăхăтĕнче Трак енчи Мăн Шетмĕ чиркĕвĕн пупĕ те пулнă вăл. Вун саккăрмĕш çултах Вăрнара куçса пынă та вăрман çумĕнче тымар янă. Вăй питти çулĕсене яваплă ĕçсенче халăхшăн усăллă ирттернĕ. Ой, мĕн кăна пĕлмест пуль авалхи юмахçă. Нумай-нумай халап. Çырни темĕн чухлĕ унăн, пичетлени те...

– Никишов, Никишов?.. Çавах пулсан-ке ара... шăпах пирĕн ялсем пулма кирлĕ вĕт вăл! – хытах тĕлĕнчĕ сутуçă. – Тăванĕсем – кӳршĕсемех. Ыр кăмăллă çынсем. Хăйне курман. Килсе çӳреме ерçĕвĕ те, сывлăхĕ те çитмест пуль, çулĕ те япăх, çывăх мар.

– Кирилл Макарович каласа панă тăрăх, тĕне кĕмен хăюллă Элĕк чăвашĕ авланнă та тарăн çырма хĕрринче пӳрт лартнă, таврари вăрмана касса, тунката хăртса тырă ӳстернĕ, чăтлăхра упа, шăнкăртатса юхакан шывра пулă тытма юратнă. Упа çырми пур-çке сирĕн?

– Элĕк çумĕнчех вăл, – пĕлтерчĕ кĕнекеллĕ хĕр. – Пирĕнтен инçех те мар.

– Шăпах çавăнта çӳренĕ те вăл ухутана. Хăй пекех патвар вун икĕ ывăл çуратса ӳстернĕ вĕсем карчăкĕпе, пурне те пĕр кунтах авлантарнă, уйăрса кăларнă. Вĕсен ячĕпе вара çĕнĕ ялсем пуçланса кайнă: Хурăн ушкăнĕнчен – Изванка; Паварин ушкăнĕнчен – Уйкас; Măша ушкăнĕнчен – Синер... Элĕк ялĕ те саралнă, тăварахра чиркӳ чанĕ çапма тытăнсан, вун саккăрмĕш ĕмĕр вĕçнелле, сала пулса тăнă, прихучĕ çирĕм тăвата яла сыпăнтарнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Элĕкре вулăс кантурĕ уçнă, районсем тусан пуç хула ятне илнĕ вăл.

Çăвар карса итлекен Элĕк пикисенчен чĕреме тыткăнлани маларах кулса ячĕ те:

– Тин пĕлтĕм иккен эпĕ хам ăçтан шăтса тухнине. Элĕк йăхĕнченех пулас. Çавăнпах пуль Элĕк сали маншăн Мускавран та мăнăрах, тăванрах, сĕткенлĕрех. Мĕн-ке, тĕрĕсех вĕт?

– Маншăн та çаплах, эпĕ те Элĕк ачин тăхăмĕ пулатăп-çке, хăшин ушкăнĕнчен тулĕк – пĕлейместĕп. Тен, Сурăм ятлинчен. Ялĕ те пирĕн Сурăмвăрри – юхан шывăн икĕ çыранне çавăрнă. Шывне те ун чухне Сурăм чăваш ячĕпе хума пултарнă... – çапла калакаласа сутуçă кĕнеке туянма кĕнĕ çынсем патне васкарĕ, унтан тăрук каялла çаврăнса хушса хучĕ: – Вăрнара каясттăвас пулсан, Кирилл Макарча ахметкассисенчен салам калăр. Вăл пĕлме кирлĕ Ахмет камне. Çав этемрен пуçланнă тет-и пирĕн вăрăм урам. Тен, çав Ахмет йăхĕнченех эпир, вĕсем хăйсем те... Э, мĕн лĕпĕртететĕп-ке, пурпĕрех аслăран та аслă асаттемĕр ачисем пулас-ха эпир – элĕксем. Каçарăр чăрмантарнăшăн.

Çырă куç харши айĕнчен ман енне каллех çĕмĕрт куç сăпайлăн тинкернĕмĕн. Эпĕ те куçăма çивĕчлетрĕм. Хĕр манран ыйтрĕ:

– Эсир, тем, пирĕн енчи çын майлă мар пек, урăхларах...

– Мĕн енĕпе-ке? – элĕкле персе ятăм.

– Сăн-пуçпа та, чĕлхе-çăварупа та, «ке» тени те элĕкле янăрамасть, – ăшшăн кулса илчĕ вăл. – Сире эпĕ пĕркун кинона кайсан сăнанăччĕ.

– Чăнах-и? Мĕншĕн-ха сăмах хушмарăр тата ун чух?

– Хĕр хăй каччăпа сĕмсĕрленсе паллашни намăсла пулать тесе шутларăм – элĕксем, эпĕр, хамăрла-юмартла та... Эпир чăннипех камне Каховский профессор сăмахĕсемпе те, Никишов ăсчах халапĕпе те ĕнентерме тăрăшрăр-ха, тавтапуç сире уншăн. Мĕн-ке, вăрттăнлăх мар пулсан, хăвăр хăш чăтлăхран шăтса тухнине калаймăр-ши?

– Мĕнех, паллашăпăр, – терĕм унран куçа вĕçертмесĕр.– Улатимĕр ятлăскер эпĕ, хушаматăм – Санаров. Вăрнар тăрăхĕнчи Шурăмпуç ялĕнчен. Сирĕн кўршĕсемех. Çак анлă Сăр вăрманĕн чăтлăхĕнченех. Сирĕн Аслă, Мăн Элĕкре çуркуннереннех тĕп инженерта ĕçлетĕп. "Сельхозтехникăра". Эсир хăвăр тата мĕнле пуçлăх-куçлăх-ха?

– Пуçлăх?..– кĕске тăхтав хыççăн хĕр, куçне ман куçран тин вĕçертсе, каларĕ: – Мĕн-ке, сирнешкел пысăк пуçлăх мар çав эпĕ, музыка пуçлăхĕ кăна. Тĕрĕссипе, консерваторире вĕренетĕп. Юлашки уйăхсем ĕнтĕ. Мĕнех-ке, паллашар – Алина Малина.

– Малина апла... Улина хăмла çырли, тутлă-пылак Улина... – ачашшăн шўтлес килчĕ манăн.

Мана итленĕ май унăн куç ытарлăхĕ йăлкăшнипе, хĕретнĕ тути хĕррисем хăмла çырли тутине сывлăша сарчĕç-ши, çăвара пылак техĕмĕ тулчĕ. Хĕрĕн ывăçăма кĕнĕ çемçе ывăç тупанĕнче кăлтлатакан чĕре таппийĕ чĕремĕм таппийĕпе хутшăнса пĕр таппа куçрĕ-ши – шалтах аптăрарăм, вĕри ўтрен уйрăлас килмесĕр хытса тăтăм.

– Мĕн-ке, эсир те кунта сăлтавсăр кĕнĕ пулас çук. Мĕнле кĕнеке шыратăр-ке? – вăл аллине ман вăйлă аларан майĕпен, вăтанчăклăн вĕçертрĕ.

– Репин кирлĕччĕ-ха мана. Телее пула, Игорь Грабарь академикăн Репин пултарулăхĕ çинчен çырнă икĕ томлă пуххи те, тĕлĕнмелле, пур иккен ял лавккинчех. 1937 çултанпа 1963 çулччен кăларман паха произведени çĕнĕ кун çути курнă. Тавах патшалăх академи издательствине. Шупашкарта художниксем мĕн тери шыратчĕç ăна. Элĕк вара тĕнче искусствин хаклă мулне халăха валеçекенĕ пулса тăни сирĕн хака çўле çĕклет. Чунăм ўнерçĕсен пурнăçĕ еннелле питĕ туртăнать-çке. Вĕсен вилĕмсĕр ĕçĕсем чуна тыткăнлаççĕ. «Атăл çинчи бурлаксем» хăйсемех мĕне тăраççĕ. Художник çав картинăна малашлăха курсах ўкернĕ пулас.

– Малашлăха курса?..– тĕлĕннĕн çамкине картлантарчĕ Алина. – Эпĕ те ун пултарулăхĕ çинчен кăштах пĕлетĕп те... Ман атте те вилет сăнарлă искусствăна юратса. Килте пирĕн мĕн тĕрлĕ кĕнеке çуккă-ши искусство пирки? Репин вĕт çав картинăра вырăс халăхĕн хĕн-хурлă пурнăçне сăнарланă марччĕ-и-ке?

– Çапли çаплах-ха та... – терĕм эпĕ пĕр кĕнекине уçса.– Акă вĕсем, Атăл лашисем, кăкăр урлă сарлака çăка янăскерсем, тулли баржăна ушкăнпа мĕкĕрлен-

се туртаççĕ. Малалла ӳпĕннĕскерсен, анчах пуç усманскерсен, çĕтĕк-çатăк тумланнăскерсен сăнарĕнче – йывăрлăха парăнмасăр чухăнлăха çĕнтересле талпăнакан этем вăй-хăвачĕ çиççе тăрать пек. Вун тăххăрмĕш ĕмĕрĕн вĕçнелле ӳкернĕ çав картинăри бурлаксем мана темшĕн-çке паянхи тертлĕ пурнăçа аса илтереççĕ. Выçăллă-тутăллă Раççей халăхĕ те, пурпĕрех пуçа усмасăр, çĕршыв киммине мекеçленсе тăваллах туртать вĕт, э? Репин ӳкерчĕкĕнчи кашни сăнарта эпĕ хам паллакан-пĕлекен çывăх çынна куратăп.

– Çаплах пуль, çаплах пуль... сирĕн шухăшпа,– терĕ те хĕр хыпăнса ӳкрĕ. – Каçарăр та, манăн киле васкамаллаччĕ.Сысна ашĕ шаритлемелле манăн. Кăмăлăр пулсан, пулăшма пултаратăр. Вăхăтăр пулсан. Эпĕ... эпĕ – пĕчченех. Мĕн-ке, сехĕрленсе ан ӳкĕр тӳрех киле чĕннĕшĕн.

Хĕр хăюлăхĕ мана хама та хăюлантарчĕ. Каччăшăн ку япăхах мар-ха. Кирлĕ кĕнекесене туяннă хыççăн, йывăрскерсене хул хушшине хĕстерсе вара эпĕ Алинăпа тухса утрăм. Ĕçе ĕлкĕретĕп-ха. «Сельхозтехника» уйрăмĕ инçех мар.

Малинсен килĕ пĕве çумĕнчех. Ултă кĕтеслĕ, çутă хĕç тимĕр витнĕ çĕнĕ пӳрт, темиçе тĕспе сăрланă вырăсла хапха. Ытти хуралтине чĕнтĕрлĕ картапа çыхăнтарнă. Сарай хыçĕнче – улма-çырла сачĕ. Панулмийĕ – шăкăри.

Пӳрте кĕрсен, стена çинчи мăнлатнă сăн ӳкерчĕке курсанах, Алинăн ашшĕ те, амăшĕ те кам пулнине пĕлтĕм: район пульницинчи тухтăрсем.

Апат пĕçерме юратаканскер эпĕ кил хуçине пулăшмашкăн вырăнлах пултăм. Кухньăра иксĕмĕр çывăх çынлах ăшталанатпăр. Кăнтăрлахи апат хатĕр те ĕнтĕ. Алина мана сĕтел хушшине туртсах лартрĕ:

– Хăна пулсамăр-ке. Ма-ке вăтанатăр? Аннесем пĕрресĕр килмеççĕ. Мĕн ĕçетĕр-ке?

"Хирĕçлесен – кӳренмелле, хирĕçлемесен – ĕçмелле", – тесе шухăшларăм та Алина буфетран сĕтел çине кăларса лартнă виçĕ кĕленчерен варринчине тĕллесе кăтартрăм:

– Эрменсенне – пилĕк çăлтăрлине.

Черккесене авалхи Элĕк чиркĕвĕн чан сассиллĕн кĕвĕлентерсе илнĕ майăн хаярлатнă иçĕм çырли сĕткенне вăл тутана-тутана ĕçрĕ. Ун хыççăн эпĕ те кăмăл туллин янклаттартăм...

– Каçхине кино курма шухăш çук-и?– çак ыйтупа манăн хĕрнĕ хĕрĕн кăмăлне пĕлес килчĕ.

– Эпĕ – ирĕк кайăк...

– Апла тăк саккăрта Культура çурчĕ умĕнче тирексем айĕнче кĕтетĕп.

Мĕншĕн эпир пит хăвăрт çывăхлантăмăр-ши? Тĕнче тытăмĕн çыххинчи этемлĕх пĕтĕленĕвĕн пĕр çиппинче палăртăмăр-ши, сисĕнмен асамлă вăй иксĕмĕре те пĕр çыхха тĕвĕлесшĕн-ши... – килнине путлĕн курса ăнланасси те пулмарĕ, анчах... хĕрĕн сылтăм аллипе манăн сулахай алă сехет çурă уйрăлмасăр çунчĕç.

Çурла уйăхĕн çурли анлă тӳпере çăлтăрсен вăййинче юрату уйне вырать. Алина мана хулран çавăтса пахчасем хыçĕнчи урапа çул çине илсе тухрĕ. Инç-

ех мар, Асамат ялӗ енче, комбайнсем ҫатӑртатаҫҫӗ, ухлата-ухлата илеҫҫӗ. Тусан мӑкӑрлантарса грузовик кӗрлеттерсе иртрӗ. Кӑҫал эпир техникӑна начар мар хатӗрлерӗмӗр. Вырмара ку таранччен комбайн ванни пулмарӗ-ха, малашне те инкек-синкек ан тухтӑрччӗ.

Пӗчӗк алӑкран сада кӗтӗмӗр. Алина лутра, тӑпӑлкка пӳрт умӗнчи кӗске сак ҫине ларса юрласа ячӗ:

Кам-ши, кам-ши юр юрларӗ

Ҫурхи ӑшӑ каҫ?

Савнӑ тусӑм, маншӑн мар-ши

Куҫусем ҫунаҫ?

Кӑштах аташас килчӗ-ши – шухӑ шухӑш-туйӑмпа хавхаланнӑскер эпӗ те юрласах каларӑм:

Савнӑ тусӑм, маншӑнах-ҫке

Куҫусем ҫунаҫ?

– Тунсӑх пуснипе Мускавра тӑван киле аса илнипе суракан чӗреме сиплетӗп хамӑр тепӗр ентешӗн Илле Тукташӑн ҫак ӑшӑ сӑмахӗсемпе. Кӗввине те Григорий Хирбю ман валлиех ҫырнӑ пуль тетӗп вара. Мӗн-ке, пӗлесех килсен, мухтанса илем-ха.

– Питӗ, питӗ пӗлессӗм килет сирӗн вӑрттӑнлӑх ҫинчен.

– "Кам-ши, кам-ши..." юрра Мускавра янраттарни куҫ умне тухса тӑчӗ. Консерваторин Пысӑк залӗ. Ларма вырӑн ҫитмест. Чӑваш музыкин, юррин ӑстисем хӑйсен маҫтӑрлӑхне кӑтартаҫҫӗ. Мана та хутшӑнтарчӗҫ унта. Юрласа пӗтернӗ хыҫҫӑн Хирбю мана саламларӗ, мухтарӗ, ыталаса чуптурӗ.

– Тутаранах мар-тӑр?

– Тутаранах, Улатимӗр, ак ҫакӑнтанах...

Чӑтаймарӑм, вӑрттӑн каҫ сӗмӗнче авкаланса тӑракан хӗрӳ кӗлеткене ытама ҫавӑрса илтӗм. Хӑй те вӑл асаплануллӑ чӑтӑмсӑрлӑх туйӑмӗсене чараймасӑр вӗри ӳт-пӗвӗпе туртӑнса ман ҫумарах ҫыпҫӑнса каҫӑхсах чуп турӗ: тутаран, питрен, мӑйран... Хӑйӗн тивӗҫне яланах пӗлсе ӑнланакан сылтӑм алӑ вара кӗпе тӑрӑх аялалла шуса анчӗ те... Юратуллӑ пӗтӗҫленӳ шӑрши сӑмсана пырса ҫапнипе пуҫ мими те шӗвелсе кайрӗ пулас. Тӳпери кӗмӗл ҫурла ҫара ӳтӗме касасран хӑрамасӑрах ҫӑлтӑр ҫумӑрӗ айӗнче савӑшу кӑкшӑмӗнчи симпыла вӑтанавӑтана, ахлата-ахлатах ӑша хыврӑмӑр.

Ҫан-ҫурӑм вӗри мунчаран тарласа тухнӑ хыҫҫӑнхи пек ҫӑмӑлланса уҫӑлса кайнӑ хыҫҫӑн ӗшенмесӗр тӳпенелле ӑнтӑлакан ҫунатлӑ астармӑшӑма тепӗр хут канлӗн чуп туса илтӗм те:

– Тавтапуҫ ҫепӗҫ кӗввӳ-юррушӑн тата вӑрттӑн парнӳшӗн,– терӗм.

– Ой, тем пекех тав хӑвӑра та мана чун канлӗхӗ парнеленӗшӗн, пирӗн те, хӗрарӑмсен, хамӑра вӑхӑчӗпе кирлӗ вӑйлӑ туйӑм пур-ҫке, пире те пурте кирлӗ ҫут ҫанталӑк ытамӗнче,– мӑйран вӑрахчен ыталама пӑрахаймарӗ Алина.

Акӑ ӗнтӗ Малинсен тутлӑ сачӗ те маншӑн ҫамрӑклӑх ҫӑтмахӗ пулса тӑчӗ. Ӗҫлес те, вӗҫес те килет. Хӗвел анасса ҫеҫ кӗтетӗп. Улах вӑхӑтне ҫӗрӗпе куҫ хупмасӑр кӗскетнӗ май хӗвел ачисем чӳречене уҫса шап-шурӑ ҫака урайӗнче

ташлама пуҫличченех канлӗх сӑпкинче сикетпӗр. Ҫапла пӗринче куҫ хупӑннӑ самантра Элӗк ачисемпе ӗрлешсе Аслати урапи ҫине улӑхнӑччӗ ҫеҫ – пуҫ тӑррин-че шӑпӑрр-шӑпӑрр! турӗ. Куҫа уҫрӑм та – тулта ҫиҫӗм ялтлатать, ҫумӑр лӳшкевӗ таврана ҫавӑрса илнӗ.

Ирхи ҫумӑра хӗвел хӑратать-ши – ялан вӑл ҫӗр питне ҫуса тасатнӑ-тасатман аяккалла тарса ҫухалать, ҫӗр ҫийӗн симӗслӗхне, мӗнпур чӗрӗ чуна илем, техӗм парса хӑварать. Асамачӗ ҫичӗ тӗслӗ чӗнтӗрлӗ кӗпер хывать, авӑ. Кӗперӗн ҫутӑ-рах вӗҫӗ Асаматах тӑрӑннӑ. Эпир, ытакланса, ҫут ҫанталӑк имне ӑша хыватпӑр.

– Шапа Ушкӑнь варӗнчи шапасене ӗмсе илсе Упа ҫырмине тӑкать хӑватлӑ Асамат, икӗ ҫырма шывне ӗҫсе Элӗк ене илем парнелет, – чечеклӗ кӗпе ӑшне пытанакан чӑп-чӑмӑр кӗлеткене пӑхса тӑранаймасӑр киленнӗ май ҫамрӑклӑх ҫулӗ ҫинче ӑнсӑртран тӗл пулнӑ ҫӗнӗ юратӑвӑма ӑшӑ сӑмахсемпе хавхаланта-рас тесех калаҫрӑм.

– Мӗн-ке, Улатимӗр, эсӗ мана каллех темле ҫунатлӑ сӑмахсемпе тӗлӗнте-ресшӗн пуль-ха?

– Чӑнах, аваллӑх сӗмӗ пуҫ миминчех пӑтранать,– эпӗ тумланнӑ пикене ҫума-рах туртрӑм.– Асамат та этемех пулнӑ иккен.

– Элӗк ачиех,– пуҫне кӑкӑрӑм ҫине сӗвентерчӗ вӑл.

Пите кӑтӑклантаракан кӑтралатнӑ ҫӳҫе шӑла-шӑла ӑнлантаратӑп:

– Асамачӗ, чӑннипе, чӑвашсемпе те ҫыхӑнман вӑл, таҫтан аякран тутарсем арабсенчен илсе килнӗ ят, мӑнаҫлӑха пӗлтерекенскер. Элӗкӗн те вун икӗ ывӑл-ран пӗри Асамат ятлӑ пулнӑ пуль ҫав. Ҫав маттур чӑвашранах пулса кайнӑ тесе ӗнентереҫҫӗ-ҫке хӑвӑр таврашри ӑсчахсем. Ун ҫинчен Никишов мучи те тӑрӑшсах тӑнлантарнӑччӗ мана. Пирӗн енче те, сирӗн патра та иран, финн-угор, пӑлхар-чӑваш, тутар-кыпчак, вырӑс ҫуначӗсем этемлӗх кӗтӗвне сарнӑ, йышлантарнӑ. Ҫӗр ҫӑрӑлчӑкӗнче нумай халӑх ҫынни Хӗвеле, Уйӑха пуҫҫапнӑ, хӑйӗн телей ҫӑлтӑрне шыранӑ. Тӗнче ҫаврӑмӗн ҫил-тӑвӑлӗнче вара эсир те, элӗксем, эпир те, вӑрнарсем, чӗрӗ тымарланса юлнӑ.

– Эпир те, иксӗмӗр, халӗ ҫав тымара ҫӗнетесшӗн юрататпӑр пуль. Хӗрарӑм туйӑмӗ вӑранса вӑйланнине сисекен пултӑм, Улатимӗр-Тимӗр кӑшӑлӑм... – Ман кӑкӑр ҫӑмне ачашлакан Алина хӗвел ҫиекен Асамат кӗперне тартас мар тенӗн ытарлӑн сӑнать.

Пуҫӑмра манӑн чылайранпах сӑвӑ йӗркисем шӑранатчӗҫ, чӑтаймарӑм – хӑпар-туллӑн калама пуҫларӑм:

Элӗк ятлӑ паттӑр – ҫӗн чӑваш.
Ҫӗн чӑваш, чун савнӑ Илемпе,
Сарнӑ, уҫланка йыш-ывӑлпа,
Таврана хунатнӑ этемпе,
Парӑнман Элӗк ачи нихҫан,
Чӗлхине, ятне те ҫухатман,
Паттӑр пулнӑ вӑл ӗҫре ялан,
Нихӑҫан тӗнче кулли пулман.
Вун-вун икӗ ывӑлӑн таврашӗ:

Сурăм, Синерпуç, Этмен, Тукташ...
Элĕк несĕлĕн мăн хурăнташĕ –
Пурте хамăршăн чи хаклă янташ,
Пурте эпĕр Элĕк-паттăр ачисем.

– Эсир, Улатимĕр, ял хуçалăх инженерĕ кăна мар, этем чунĕн инженерĕ те иккен, поэтлах сăнарланă пирĕн тăрăх историне. Ĕненетĕр, эпир – Элĕк ачисем,– Алина ытамран вĕçерĕнчĕ те йăлттам кĕлеткине балерина çĕкленĕвĕллĕн явкалантарчĕ, мана та хăйĕн хĕрӳллĕ çеммине кĕртсе ячĕ.

Çуллахи тулăх та тутлă сад пире хăйĕн пылак тутипе савăнтарса симĕс тум ытамĕнче лăпкаса килентерет-ха – анчах... сад та хуçасăр мар: ашшĕ те тухать унта час-часах, амăшĕ те... Вара эпир тĕл пулу каçĕсене шкул садĕнче малалла тăсрăмăр. Ĕлĕкрех ку ешĕл лаптăкра чиркӳ прихучĕн масарĕ пулнă теççĕ.

Самана улшăнса, пăтранса пынă май антихристсем чиркӳ хĕресĕпе чанне туртса антарнă хыççăн шкулта вĕренекен çамрăк элĕксем сăваплă вырăнта улма сачĕ лартса çитĕнтернĕ.

– Акă пирĕн улмуççи, класпа лартнă чун уççи...– Алина анис йывăççи тавра ташласа çаврăнчĕ, уçă çинçе сассипе хавассăн юрă пуçларĕ:

Авăнать, авăнать,
Улма йывăç авăнать.
Улми тулăх пулман пулсан
Авăнатчĕ-ши вăл?

Эпĕ ăна çăмăллăн çĕклесе хам тавра çавăратăп та урлăлла ӳсекен мăн турат çине улăхтарса лартатăп:

Савăнать, савăнать,
Манăн чунăм савăнать.
Эсĕ манпа пулман пулсан
Савăнатчĕ-ши вăл?

Улма йывăççисене аваллăхри салтаксем пек тавраллах тирексем хӳтĕлеççĕ. Тухăç енче, икĕ рет йывăç хушшинче – сукмак.

– Алина, пĕлетĕн-и çакă аллейăра миçе тирек ӳснине?

– Шутламан. Мĕн тума кирлĕ-ке ку?

– Пурнăç çулне палăртма. Çакăнта миçе йывăç, пирĕн юрату та, тен... пирĕн юрату та çавăн чухлех пурăнĕ.

– Шухăш вылявĕ кăна мар-и-ке ку?

– Тен, ун пек те пулĕ. Çапах та... эпĕ – шутланă. Шăпах çĕр тирек кашлать унта...

– Нивушлĕ çавăн чухлех? Мĕн-ке... хам шутласах тухам-ха.

– Пĕрре-иккĕ-виççĕ... тăхăр вун тăххăр, çĕр! – Алина шутласа пĕтерчĕ те пĕчĕк ачалла сиккелесе илчĕ. – Чăнах та çĕр тирек! Эй, тĕнче! Итле пире! Çĕр çул пурăнать Улатимĕрпе Алинăн юратăвĕ!!!

Пире тăнласа пăшăлтатакан çӳллĕ йывăççем – юрату хуралçисем – хушшипе вĕлтĕртеттерсе чупса кайнă çав чун хыççăн эпĕ те çĕкленӳллĕ ĕмĕтпе вăскарăм.

Кам тăнласа курнă тирексем пупленине, алă çупнине, çавă туять, ăнланать вĕсен ытарлă сассине. Тирексен шăпăл-шăпăл кĕввипе Алина хушăран хушă пĕр-пĕр юрă ĕнĕрлекелесе илет. Ман çурăма та, акă, иртерех сарăлса тăкăнакан сарлака çулçăсем утиял вырăнне витме пуçларĕç. Кĕре хăваласа килекен шухă çил çаври çара пĕçсене çупăрлать, вĕри хушша кĕрсе кĕвĕçӳллĕн аташать.

Сисмерĕмĕр те, Алинăн каникулĕн кĕске вăхăчĕ пăравус пек кăшкăртса ячĕ: çула тух! Алинăна Вăрнар станцийĕнче васкавлă пуйăс çине лартса ятăм. Лартса ятăм та... чăтаймасăр шпалсем тăрăх хыççăн чупас килчĕ. Перрон çинче тутана хăмла çырли тути парнелесе хăварнă Элĕк ачи-хĕрĕ куç умĕнче кăна тăрса юлчĕ.

Пирĕн юрату çырупа çыру хушшине куçрĕ, хĕмленӳллĕ ăшă сăмах пуххине чĕре картлатнă пек картлаттарса пуйăс каллĕ-маллĕ кустарса çӳрерĕ. Майĕпенех, акă, çумăрлă кĕре шартлама сивĕ хăйĕн ытамне хупрĕ. Хĕллехи каникул та çитрĕ. Алина Элĕк хапхинчен çаплах кĕреймерĕ. Экзаменсем тытнă хыççăнах вăл консерватори ансамблĕпе Чехословакие, Венгрие гастроле тухса кайнăмĕн. Хамăн та Мускава çитме пушă вăхăт тупăнмарĕ. Кĕçех мана Элĕк салинчен уйăрса Шупашкар хĕрĕсен вăйă картине хупрĕç. Çĕнĕ ĕç пуканне якатса ывăннă хыççăн Атăл хĕррине уçăлма-канма тухатăп. Çӳллĕ çыран хĕрринче мăшăрăн-мăшăрăн тăвалла-анаталла юхакан Юрату йăшăлтатăвне сăнатăп-сăнатăп та чĕре хĕссе килнипе юхан шыв хĕрне чупса анатăп, пите çуса уçăлатăп. Хамăн Юрату сăмсахĕ Атăл çыранĕнче мар, Элĕкри Упа çырми хĕрринчех пуль тесе тăнран каятăп. "Атăл" хăна çуртне мана Тунсăх ăсатса ярать: ытакласах, кашни каç. Ирпе тин вăл уçнă чӳречерен тухса шăвăнать. Ĕç хуйха-суйха юратмасть – ăна уçă, тăнлă пуç, ăста, вăр-вар алă çеç кирлĕ. Ĕçре пурте манăçать.

Хĕрĕн шухăш-туйăмĕ хĕрĕх тĕрлĕ кăна мар, çĕр хĕрĕх тĕрлĕ те пулма пултарать иккен. Эпĕ, ухмаххи, ăна-кăна чухламалăх пиçсе çитеймен курăнать. Манăн юратăвăм пĕр мана кăна йăпатман çав. Алинăн Мускавра каччи пулнă. Эпĕ вара ама ясарлăхне ар ытамĕнче хĕртсе савăклашмалли черетлĕ вăйлă йĕкĕт вырăнĕнче çеç шутланнă пуль. Миçемĕшĕ-ши? Кун пирки хăйĕнчен те  ыйтаймăн. Çавă тулли çу каçĕсенче вăл мана хăй консерваторирен вĕренсе тухнă хыççăн иртерекен сывпуллашу концертне Чайковский ячĕллĕ Пысăк зала чĕнетĕп тесе питĕ шантарнăччĕ. Эпĕ çав вăхăта чăтăмсăррăн кĕтрĕм. Рояль умĕнче мăнаçлăн ларса Тукташпа Хирбюн тĕнчене сарăлнă сăвви-юррине чаплăн янраттаракан Элĕк хĕрне каçса кайса итлес, вăл чăваш ятне илем хумĕнче çӳллĕ шая çĕклеме пултарнишĕн савăнса хăпартланас килетчĕ. Анчах... ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ. Диплом илнĕ-илмен Алина Палестинăна тухса вĕçнĕ, араб ачисене музыка вăрттăнлăхне алла илме вĕрентмешкĕн васканă. Кĕр мăнтăрĕпе туллин кăнтăралла вĕçекен, ют енчен хамăр тăрăхри çуркуннене ушкăнпа кĕтсе илме васкакан кайăксен сассинче пуçа пăтрата-пăтрата уйăрса илеттĕм пулас хĕрӳ туйăм калаçăвне.

Çĕр çул мар, пĕр çул та пурăнаймарĕ пирĕн юрату. Алинăн чĕринче пытанса юлнă-ши çав юратăвăн пĕр ылтăн пĕрчийĕ те пулин тесе шанăç шыраттăм. Ăшчикĕм час лăпланаймарĕ, хушăран хушă Элĕк çăтмахĕнчи асамлăха асаплăн

аса илтерсех тăчĕ. "Атăл" хăна çуртĕнчен хăçан хамăн хваттере куçнине те аса илме пăрахнă пуль, пурнăçăм çулĕ çине таса чунлă шанчăклă хĕр – тепĕр Элĕк ачи – чупса тухнине çеç куç умĕнчен çухатмастăп. Унпа пĕрлешсе ачапчалла та, ачасен туйне туса мăнуксемлĕ те пултăмăр. Ĕçлеме те пăрахман-ха. Акă, паян хамăн ĕçпе Элĕке каятăп. Çул çинче машинăра сехечĕпех çав тапхăр тата çавăн чухнехи вăхăт парнеленĕ Алина Малина пуçра, асран кайма, куç умĕнчен çухалма пĕлмерĕ. Çур çĕр иртнĕ хыççăнхи тĕлĕк тата... Теме сиснĕ пекех-çке чĕрем хушăран тăвалла хăпаракан пăравус ураписен сасси пек кăрттăк-кăрттăк! туса илет.

Канашлу ирттернĕ хыççăн савăнăçлă апатчен пĕччен уçăлса çӳрес килчĕ. Пĕве çумĕнче сарăлса ларакан администраци çуртĕнчен тухса шкул сачĕ еннелле уттартăм. Хĕвел çурла уйăхĕпе пуçа çурмаллах касса ăшалать. Кăнтăр енчи пек вĕри сывлăш ăша тулать, тар супăнĕпе кĕлеткене çăвать. Астăватăп, тахçан ку ешĕл лаптăка тимĕр карта тытса çавăрнăччĕ. Халĕ – яри уçă, ирĕклĕх. "Кану паркĕ" тенине пĕлтерекен хăма татăкки курăнать. Сукмакĕсене асфальт сарнă. Çеремне шăрăх çуласа шуратнă. Пĕлеймерĕм, урам енчи ватă тирексене темшĕн каснă, мăн тункатисен кутĕнче хунав ешерет. Парк варринче – салтаксен паттăрлăхне асра тытса лартнă илемлех мар палăк. Сылтăм енчи тирекĕсем мăнаçлах-ха. Эпĕ вĕсен хушшипе ним çинчен те тарăннăн шухăшламасăрах хуллен утса кайрăм. Çамрăк чухнехи аса килчĕ-ши, ытти мĕн-ши, ăнланаймарăм, йывăççене сасăпах шутласа пыратăп-иç. Вĕçнелле тухни, çĕре тăхăр вун саккăра çитертĕм. Малалла... икĕ тунката курăнать. Икĕ тирекне каснă апла. Кам-ши? Мĕншĕн-ши?

Аллея леш пуçĕнче – тăпăлкка чул çурт. Уçă чӳречери Родион Щедринăн сывлăшалла сарăлакан çунатлă кĕввийĕ ытла та çепĕççĕн ытамларĕ чĕреме, пăчă çуртра кунтăкланма пуçланă пуçа уçăлтарса ячĕ, çан-çурăма хытарчĕ, кĕлеткене тӳрлетрĕ, кăмăла çĕклерĕ, куçа чариех уçса ячĕ. "Элĕк салинчи 1-мĕш ача сачĕ" тесе çырнине вуласа илтĕм вара çурт алăкĕ тăрринчи пĕлтерĕве.

Кĕвĕ тăруках чарăнчĕ те, алăкран тăпăлкка хĕрарăмпа пĕчĕк хĕр ача тухрĕç, мана хирĕçех утса килеççĕ. Тĕлĕннипе шаках хытрăм: кăвак чечеклĕ кĕске çӳхе кĕпе, шап-шурă пушмак, кăтралатнă хулăн çӳç, кĕрен куç харши, ун айĕнчи çĕмĕрт куç... Уçăрах кăкăрĕ çинче икĕ чĕреллĕ ылтăн кулон йăлкăшать.

– Алина?! – сисмесĕрех кăшкăрса ятăм та, ачана хăратсах пăрахрăм.

– Улатимĕр! – ватта пусма пуçланă хĕрарăм ачана алăран вĕçертсех мана ыталаса илчĕ, чуптума пикенчĕ.

– Дедульăна каласа парап-ха,– тесе ачи хăяккăн пăрăнса тăчĕ.

– Кала, кала, уншăн эпĕ сана шăккалат туянса паратăп, – пуçĕнчен шăлчĕ ăна хĕрарăм. – Маншăн халĕ пурпĕрех. Ах... чĕрем...

Пуканене варрине хупса эпир тирек сукмакĕпе урам еннелле утрăмăр.

– Шутла-ха, Алина, çакăнта халĕ миçе йывăç?

– Чăнах та, шутлас-ха, миçе юлнă-ши-ке, атту кунти тирексене кассах пĕтерме пуçларĕç.

Тротуар патне çитсен вăл хуйхăллăн каларĕ:

– Тăхăр вун саккăр çеç... Мӗн-ке, икӗ тунката...

– Иксӗмӗр мар-ши вӗсем? Икӗ тунката... Юрату садне ешерме чăрмантарнă хăрăк йывăç тункатисем. Пирӗн шкул класӗн, иксӗмӗрӗн улмуççине те масар çăтнă. Юратуне те... – кăкăр пӳлӗнсе ларчӗ.

Йӗме пуçланă Малина сулăнса кайрӗ. Хӗр ачи те нӗшӗклерӗ. Эпӗ хӗрарăма ӳкесрен ярса тытрăм, ачипе иккӗшне те çупăрларăм.

– Каçар мана, Улатимӗр. Сутрăм сана Юрату пасарӗнче. Мӗн тери айăпа кӗтӗм. Малтанах пӗлтереймерӗм, кайран аванмарлантăм, вăтантăм. Каччăсен те унашкал йăпану сахал мар пулать пуль терӗм те... Упăшкам ман, Патрисия Лумумба ячӗллӗ халăхсен туслăхӗн университечӗ йăваласа кăларнă революционер, хăйсен ӗмӗрӗпе тăсăлакан вăрçинче ирӗклӗхшӗн çапăçса пӗтрӗ. Унран кăтра пуç çуратман. Раççее таврăнсан Чулхулана суйласа илтӗм, оперăпа балет театрӗнче ӗçлерӗм, пенсие тухиччен.

– Шупашкара чун туртмарӗ-им?

– Чӗннӗччӗ мана унта тахçан, хамăрăн Элӗк ачиех – Борис Марков. Чунăм та тăван енех туртатчӗ те... Сана тӗл пуласран хăрарăм. Чулхулара чăваш нумай. Ман валли хамăр Элӗк чӗппиех тупăнчӗ. Хăй лайăх çын, манăн малтанхи йăнăшсене каçарчӗ, хӗрарăмăн чыслăхне пурпӗрех икӗ хутчен уçаймастăн терӗ те юратнă пек пулсах килӗшрӗ манпа пурăнма. Хӗрарăма юраканскер пулчӗ. Халӗ упăшкам хăйӗн ашшӗ-амăшӗн тӗп килне çу каçма илсе килчӗ. Кӗçех хулана каятпăр. Икӗ ача ӳстертӗмӗр. Ку – кӗçӗн мăнукăм. Ача садӗнче вăхăтлăха ӗçлетӗп, музыкăпа чуна кантаратăп. Акă тата паян эсӗ тепӗр нота хушса патăн. Эх-ха-хай, пурнăçа ăна... Тек ӗнтӗ сана сысна ашӗ ăшалама хăнана чӗнеймӗп – упăшкам кӗвӗçӗ. Чăвашăн унăн кӗвӗçӗвӗ кӗçӗ пек кӗçӗтсех тăрать мар-и-ке? Халӗ манăн чӗреме шаритлесси кăна юлать. Ай-уй, мӗн-ке, мӗн тапăртатса тăратпăр-ке тункатасем хушшинче? Тунката мар-и-ке?

Хулран çавăрса тытнă хӗрарăм мана сивӗнеймен кӗлеткипе ăшăтса каялла талкăштарса илсе кайрӗ.

– Мӗн пулчӗ-ке, Алина? – тӗлӗнтӗм эпӗ.

– Нимӗн те пулман, Улатимӗр. Аса килчӗ те...

– Мӗн, хамăрăн çак садри çамрăклăх савăшӗ-и?

Мăнукӗнчен вăтанма мансах вăл мана питӗ туйăмлăн чуптуса илчӗ. Ӳчӗ пӗркеленнӗ пулин те ун айӗнчи сивӗнмен иккен. Куçа уçрăм та хамăр çине çăвара карса пăрахса кулакан хӗр ачана куртăм.

– Савăшу хӗрӳлӗхӗ те, нихăшӗ те манăçман. Иксӗмӗре майлă тӗл пулу пултарсанччӗ. Ай, ухмаха тухатăп пуль?.. Манăçми Элӗк каçӗсем куç умӗнчен вӗлтӗртетсе иртнипе чӗре кăтăкланать. Чăмăрта-ха мана сывлăш питӗрӗнсе ларичченех, куç курми пуличчен... Ай... Айта-ха часрах!.. Ачине кунтах хăварăпăр. Вылять вăл пӗччененех...

Садикри пуш пӳлӗме юрату кӗввипе тултарса лартнă хыççăн Алина пианино умне ларчӗ.

– Астăватăн-и эсӗ мана săвă парнелленине? Элӗк сăввине? – терӗ. Эпӗ унăн пуçламăшне аса илтертӗм:

– Çут тĕнче хăвачĕ Асамат...

– Хывнă мăн кĕпер пирĕн енне...– пĕчĕк ал тутрипе куçне шăлса типĕтнĕ май Алина сăмсине нăшăклаттара-нăшăклаттара калаçрĕ. – Асамат пирĕн Упа çырми çăлкуçне тахçанах ĕмсе типĕтнĕ пуль тесе эпĕ Палестинăра нушаланаттăм. Чăнах та иккен, Асамат мăнаçлăхĕ кăна тăрса юлнă унта. Тата – Элĕк ачин юрри. Сан сăмаххусене юрра хывнăччĕ эпĕ. Çавна итлеттерме чуптартăм та сана...

Юрă кĕввипе аташса кайнăскер эпĕ пианино калама пăрахнă çамрăклăхри юратуçăм ӳт-пĕвне çаралатма пуçланине те сисмен...

Ача садĕнчен çунатланса тухсан каллех аллейăпа утрăмăр. Выляса ывăннă хĕр ачи умра сиккелесе пырать.

– Элĕке килес умĕн манăн темшĕн-çке хĕр чухнехи çакă кĕпене чăматана пăрахас килет, сан ылтăн парнӳне кăкăр çине çакма манмастăп. Тен, тĕлĕкри пек те пулин ăнсăртран курайăп-им сана тесе çак сукмакпа каллĕ-маллĕ утатăп. Ой, манаймастăп çав уйăхлă, ăшă, сулхăнрах каçсене... Ма-ке чараймарăм-ши ун чухне хĕрĕвĕме? Кашни хĕрарăмăннах уйăхран уйăх астарса арçын çумне çывхарма ăнтăлтаракан туйăма пусараймарăм. Халĕ те... Сан куçу куçăма сăнăласанах... ӳт-пӳ вĕриленсе кайрĕ... Ах, унашкал хĕтĕртӳ урăх пĕр арçынпа та пулман маншăн асаплăх саманчĕ. Кĕлеткере тем йăшăлтатма пуçлать... Эй, Турă! Тинех чуна кантартăм, пусăрăнтартăм. Урăх сана те курайăп?..

– Калама пултараймастăп ун пирки. Çапах та чĕрӳне юрату çатми çинче ăшаласа нушаланиччен атя манпа ăшаланă сысна ашĕ çиме?

– Ăçта? Шупашкар ресторанне мар пуль те?

– Элĕк хупахне. Кĕтсе те ывăнчĕç пуль. Ĕçки-çикине мансăр пуçламаççĕ-çке.

Кану вăхăтне çапла шеллемерĕм. Ĕçсе-çисе, юрласа-ташласа чунăмăрсене уçрăмăр. Параппанлă кĕвве аслати кĕмсĕртетсе вăйлатрĕ. Асамат ялĕ еннелле шăвакан пушаннă пĕлĕтсем хушшипе асамлă кĕпер карăнчĕ. Алина ман куçран ĕмсе ярасла пăхрĕ.

– Тавтапуç сана, Улатимĕр, юрату апачĕшĕн, – терĕ, вара мăнукне çавăтса анаталла утса кайрĕ. Иксĕмĕр хушăра карăннă Юрату кĕперĕ те Асаматпа Упа çырми хушшинчи кĕпер хĕвел шевлипе çухалса пынă пекех туйăнчĕ. Çав хушăрах тата тĕлпулу куççулĕн тăварлă çумăрĕ хыççăн икĕ куç хуппинче пирĕн Юрату кĕперĕ йăлкăшса таврана илем сăнĕ кĕртнĕ пек те. Çапла, çивĕч шухăшах çиеле çĕнтерсе тухрĕ. Алина çаврăнса алă сулчĕ те, пирĕн куççем асаплăх хушшинче çĕнĕрен тĕл пулса йăлкăшрĕç...

Çула тухсан, парк çуммипе иртнĕ чухне, мăшăр тунката курăнса кайрĕ. Тымартан шăтнă хунавсем симĕс çулçисемпе сулса мана Шупашкаралла Элĕк-Вăрнар кĕввипе ăсатрĕç:

Сăр вăрманĕн, ват вăрманĕн уçланки
Варринче пурнатпăр эпĕр – чăвашсем.
Тыр карманĕн, мăн кăрманĕн хуплашки
Айĕнче хунатпăр йышлăн, кӳршĕсем.
Элĕкьен, Вăрнарьен – Чăвашьен.

Сурпан ҫыхнă Сурăм лăпкăн хумханса
Ҫавалпа вылять ăш пĕрхĕм сирпĕтсе.
Тӳпере ҫич тĕслĕн, уççăн йăлкăшса,
Карăнать кĕпер хушша, чуна чĕртсе.
Элĕкьен – Вăрнарьен – туслăх ен.
Элĕк енĕ – Чăваш ҫĕрĕн ҫӳл тӳпи,
Ҫывхарать унтан тăссан тăван алли.
Вăрнар енĕ – Чăваш ҫĕрĕн кăвапи,
Элĕксемшĕн те вăл пурăнăҫ апи.
Элĕкьен – Вăрнарьен – пĕрлĕх ен.
Хĕвел хывнă Асамат кĕперĕн айĕнче,
Ҫĕр-анне тымарĕн хĕрӳ юн вылявĕнче
Юрату ҫунат сарать те, туслăх туптанать,
Элĕкпе Вăрнар пĕр ҫеммĕн юрă шăрататъ.
Элĕкьен – Вăрнарьен – тăван ен.

Элĕк романĕ пуҫăмра татах та анлăрах сарăлса, хаваслă кĕвĕре чуна кантарса та, чĕрене йăшкаттарса та малаллах чупрĕ.

2012 ҫул

---



*Владимир Прокопьевич КУЗЬМИН Вăрнар тăрăхĕнчи Хурăнсур Ҫармăс ялĕнче 1937 ҫулхи ҫурла уйăхĕн 19-мĕшĕнче ҫуралнă. Ҫĕрпелти ҫичĕ ҫул вĕренмелли тата Вăрнарти вăтам шкулсем хыççăн пĕлĕвне малалла И.Я.Яковлев ячĕллĕ патшалăх педагогика тата Чулхулари социаллă политика институчĕсенче ӳстернĕ.*

*Ҫар хĕсметĕнчен таврăнсан Вăрнар район хаҫатне вырнаҫнă. Ҫав вăхăтсенчех литература ĕҫне пуҫăннă. 2007 ҫулчченех республикăри тĕрлĕ массăллă информаци хатĕрĕсен редакцийĕнче ĕҫленĕ, вăл шутра «Тăван Атăл» журналта сакăр ҫул: пай пуҫлăхĕнче тата тĕп редактор заместителĕнче.*

*«Тăван Атăл» уншăн «Пакша» калавĕ тухнăранпах тăван. Журналта каярахпа вăл вунă повесть, пĕр роман пичетленĕ. Кăҫал ҫирĕм улттăмĕш кĕнеки Чăваш кĕнеке издательствинче «Вĕҫев» ятпа кун ҫути курчĕ. Алексей Талвир, Иван Ивник ячĕллĕ премийĕсен лауреачĕ.*

*«Тăван Атăл» журнал Владимир Прокопьевича ҫавра ҫулпа саламлать, ырлăх-сывлăх, пултарулăхра ҫĕнĕ ӳсĕмсем сунать.*